26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 7 ЭРНЕКУН 5(6500) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем январĕн 5-мĕшĕнче, пилĕк кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн, БЕРДИЧЕВ хулипе пысăк чугун çул узелне, нимĕçсен кăнтăр-хĕвеланăç енчи оборонин хăватлă опорнăй пункчĕ пулса тăнăскере, штурмласа тытса илнĕ.

БЕРДИЧЕВ хулине тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ЛЕСЕЛИДЗЕ генерал-полковникăн тата ПЕРХОРОВИЧ генерал-майорăн çарĕсем, артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРНОФИЛЛИН артиллерисчĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн КРАСОВСКИН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă:

КОЛОБОВ полковникăн 389-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВОЛКОВИЧ полковникăн 117-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, ПРОХОРОВ генерал-майорăн 24-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВОРОЖИЩЕВ полковникăн 395-мĕш Тамански Хĕрлĕ Ялавлă стрелковăй дивизийĕ, ГУСАКОВСКИЙ подполковникăн 44-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă танковăй бригади, ИЛЬЮШКИН подполковникăн 12-мĕш Гвардейски уйрăм танковăй полкĕ, СОЛОМАТИН полковникăн 312-мĕш Гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ВИЛЕНСКИЙ подполковникăн 493-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ПЕТРУНЯ подполковникăн 69-мĕш Гвардейски Новороссийски Хĕрлĕ Ялавлă артиллери полкĕ, СИГАЕВ подполковникăн 91-мĕш Гвардейски минометнăй полкĕ, ЛОЖЕЧНИКОВ полковникăн 227-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, БЕРДИЧЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «БЕРДИЧЕВСКИЙ» тесе ят парас

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас.

389-мĕш Бердичевски стрелковăй дивизи,

117-мĕш Гвардейски Бердичевски стрелковăй дивизи,

24-мĕш Бердичевски стрелковăй дивизи,

44-мĕш Гвардейски Бердичевски Хĕрлĕ Ялавлă танковăй бригада,

12-мĕш Гвардейски Бердичевски уйрăм танковăй полк,

312-мĕш Гвардейски Бердичевски истребительнăй противотанковăй полк,

493-мĕш Бердичевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

91-мĕш Гвардейски Бердичевски минометнăй полк,

227-мĕш Бердичевски штурмовой авиаци дивизийĕ.

395-мĕш Тамански Хĕрлĕ Ялавлă стрелковăй дивизие тата 69-мĕш Гвардейски Новороссийски Хĕрлĕ Ялавлă артиллери полкне, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче темиçе хут та чапа тухнăскерсене, II-МĔШ СТЕПЕНЬ СУВОРОВ орденĕпе наградăламалла тăватас.

Паян, январĕн 6-мĕшĕнче, 1 сехетре, пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ БЕРДИЧЕВ хулине ирĕке кăларнă çарсене, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут харăс персе, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, БЕРДИЧЕВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Пирĕн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе иккама пăхăнманлăхĕшĕн вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав.

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи январĕн 6-мĕшĕ.

Теплоэлектроцентраль строителĕсене Никольский, Поляковский, Комаров, Панкрушев, Пелих, Кучерук юлташсене

Челябинскри теплоэлектроцентралĕн строителĕсемпе монтажникĕсене хăватлă 100.000 киловатлă турбогенератора туса пĕтернипе тата улттăмĕш хурана ĕçлеттерме тытăннипе саламлатăп.

Электричество станцийĕсен хăвачĕсене пĕр тăтăш ӳстерсе пырса, совет энергетикĕсем ӳссе пыракан оборона промышленноçне пĕр чарăнмасăр ĕçлесе тăма май параççĕ.

Эсир хăвăр вăйăра шеллемесĕр ĕçленине тата эсир нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкмашкăн промышленноçпа паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшнине партипе правительство пысăк хурса хаклаççĕ.

Эсир малашне те геройла, пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, энергетика хăвачĕсене малалла та ӳстерсе пырассине эпĕ хытă шанса тăратăп. Çав хăватсем нимĕçсен захватчикĕсене хăвăртрах тата пĕтĕмпех аркатса тăкмашкăн пирĕн çĕршывăн производствăллă вăйĕсене пĕр тăтăш ӳстерсе пыма май парĕç.

И. СТАЛИН.

Сталинск

Гарбузов, Горский, Сергиенко Стрельцов, Москвин юлташсене

«Сталинскпромстрой» трестĕн строителĕсене тата Кузнецкри ферросплав завочĕн металлургĕсене пиллĕкмĕш кăмакана ĕçлеттерме пуçланипе тата завода туса пĕтернипе саламлатăп.

Вăя шеллемесĕр хĕрӳллĕн ĕçлесе, эсир завода кĕске срокрах туса пĕтертĕр, çапла вара çар промышленноçне питĕ кирлĕ стратегиллĕ чĕртавар пулса тăракан ферросплава тумалли вăйсене чылай ӳстертĕр.

Сире хăвăр ĕçĕрте малашне çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунатăп.

И. СТАЛИН.

Енакиево, металлурги завочĕ

Губкин, Бычковский юлташсене

Енакиеври металлурги заводĕнче ĕçлекен рабочисене, инженерсене, техниксене тата служащисене икĕ домна кăмакине юсаса ура çине тăратнăшăн тата ĕçлеттерме пуçланăшăн хĕрӳллĕн саламлатăп.

Кăтартуллăн ĕçлесе, Эсир Донбасри хура металлургие юсаса ура çине тăратас ĕçе пуçласа ятăр, промышленноçа çĕнĕрен ура çине тăратас тата нимĕçсем варварла хуçаланнин результачĕсене пĕтерсе тăкас йывăр задачăна кĕске срокрах пурнăçа кĕртме пуррине кăтартса патăр.

Сире хăвăр ĕçĕрте малашне çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунатăп.

И. СТАЛИН.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Александр Александрович Богомолец академика, Украинăн наука академийĕн президентне, Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парасси çинчен

Наука тĕлĕшпе питĕ паха ĕçсем тунăшăн, сурансене тата хуçăлнă шăмăсене сыватмалли питĕ лайăх препаратсем тунăшăн Александр Александрович Богомолец академика, Украинăн наука академийĕн президентне, Ленин орденĕпе тата «Серп и Молот» медальпе наградăласа, Социализмлă Ĕç Геройĕн званине парас:

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар соединенийĕсене орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе

232-мĕш Сумски-Киевски стрелковăй дивизие.

74-мĕш Киевски стрелковăй дивизие.

34-мĕш Сумски-Киевски стрелковăй дивизие.

16-мĕш Гвардейски Киевски минометнăй полка.

87-мĕш Житомирски танковăй полка.

1-мĕш степень Богдан Хмельницкий орденĕпе

Чехословакин 1-мĕш Суворов орденлĕ уйрăм бригадине.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав. Кремль. 1944 çулхи январĕн 4-мĕшĕ.

Агротехника кружокĕ

СЕНТЕРВАРРИ. «Красная звезда» колхозра декабрĕн малтанхи кунĕсенчех агротехникăна вĕренмелли кружок ĕçлеме тытăнчĕ. Кружокра 30 çын вĕренет. Занятисене колхоз агрономĕ Д. Гринберг юлташ ертсе пырать.

Пĕр уйăх хушшинче 4 заняти пулса иртнĕ, çак темăсемпе калаçусем иртнĕ: ӳсен-тăрансен пурнăçĕ тата вĕсем мĕнле тăранаççĕ, çĕре мĕнле çемçетмелле, выльăх-чĕрлĕхсен апачĕсем тата выльăх чĕрлĕхсене мĕнле пăхса çитĕнтермелле.

Агроном Гринберг занятисене яланах çуракине хатĕрленес ыйтусемпе çыхăнтарса пырать. Кружока çӳрекен колхозниксем çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. 60 центнер тулă, 30 центнер пăрçа сортласа пĕтернĕ, халь вăрлăхлăх сĕлĕ аласа тасатаççĕ. Çак юлашки кунсенче кăна уя 450 лав тислĕк кăларнă, 7 центнер çурă кĕл пухнă.

Анчах районри нумай колхозсенче агротехникăна вĕренмелли кружоксем усман-ха. Ку тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕн руководителĕсем нимех те тумаççĕ. Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ П. Титов колхозсенче пулас вырăнне ытларах канцелярире ларса ирттерет.

М. ИЛЬИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 4-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ, çав шутра—ПЛОСКОВО, АЛЕКСЕЕВСКОЕ, ГРИШАНКИ, ЧЕРНУХИ, ТАТЫРИНО, ГОРЫ, ТРЕХАЛЕВО, ТЫКОВО, ФЕНЕВО ятлă ялсене тата ИЗОЧА ятлă чугун çул станцине. Пирĕн çарсем ВЕЛИКИЕ ЛУКИ хулипе НЕВЕЛЬ хушшинчи чугун çула тăшмантан пĕтĕмпех тасатнă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем тăватă кун хушши хаярран çапăçнă хыççăн паян, январĕн 4-мĕшĕнче, БЕЛАЯ ЦЕРКОВЬ хулипе пысăк чугун çул станцине штурмласа тытса илнĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче çав фронтри çарсем, наступлени туса пырса, Винница облаçĕнчи ПЛИСКОВ ятлă район центрне, Киев облаçĕнчи СТАВИЩЕ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата ытти 40 яла ытла йышăнса илнĕ, çав шутра—СТРИЕВА, СЛОЛДЫРЕВ, ПОЛЯНКИ, САДКИ, СИРУКИ, ПИЛИПЫ, СОСНОВКА, СЛОБОДИЩЕ, РОТМИСТРОВКА, ЧЕРНЯВКА, СКОМОРОШКИ, СКАЛА, БУГАЕВКА, РОСИШКИ, ДУБРОВКА, АНТОНОВКА, ЯКИМОВКА, ПЛОСКОЕ, РУЖКИ, СЕВЕРИНОВКА, ПОТЕЕВКА, СКРЕБЕШИ, ОЛЕЙНИКОВА СЛОБОДА, КРАСНОЕ ятлă ялсене.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Январĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 81 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 36 самолетне персе ӳкернĕ.

ЯНВАРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 5-мĕшĕнче пирĕн çарсем НЕВЕЛЬ хулинчен çурçĕртерехре малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 90 пункта ытла йышăнса илнĕ, çав шутра — КОЖИНО, ПЕТРОВА, ПОРОХОВО, МЯТЬКОВО, БАБИНО, ТОЛСТУХОВО, ОСНИЦЫ, БОЛЬШОЕ НАРИВНО, ТЕПЛУХИНА, БОРЩАНКА, ОКНИ, ВЛАСЬЕВО ятлă ялсене тата ВЛАСЬЕ ятлă чугун çул станцине.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем темиçе кун хаярран çапăçнă хыççăн, январĕн 5-мĕшĕнче, БЕРДИЧЕВ хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра—Киев облаçĕнчи ТАРАЩА ятлă район центрне, БОЛЬШИЕ КАЗАРЫ, ВРУБЛЕВКА, ДРЫГЛОВ, НОВОСЕЛКИ, ГОРОДИЩЕ, ТЮТЮНИКИ, МАЛЫЕ КОРОВИНЦЫ, МАЛАЯ ТАТАРИНОВКА, ОЧЕРЕТНЯ, ОЧИТКОВ, ГОРОШКОВ, КРИВЧУНКА, ТИХИЙ ХУТОР, СКИБИН, ЧЕРНИН, НАСТАШКА, ШКАРОВКА ятлă пысăк ялсене тата ДЕНГОФОВКА, КРИВЧУНКА ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Январĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 37 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 90 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Çавăн чухне нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра тăшман пехотипе танкĕсем темиçе хут та контратака тунă. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухату тӳстернĕ. Нимĕçсен 14 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Нимĕçсенчен 2 танк, артиллери батарейи, 77 пулемет, боеприпассен складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Тăшманăн йышлă пехотипе танкĕсем, Бердичев хули патĕнчи меллĕ рубежсемпе усă курса, вăйлăн хирĕç тăнă. Темиçе кун хушши хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн пехотинецсемпе танкистсем Бердичев хулине вăркăнса кĕнĕ. Çав вăхăтра пирĕн ытти чаçсем нимĕç çарĕсен флангĕсене вăйлăрах хĕсме пуçланă. Хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем паян, январĕн 5-мĕшĕнче, Гнилопять шывĕ урлă каçнă та Бердичев хулипе пысăк чугун çул узелне штурмласа тытса илнĕ. Хула патĕнче тата урамсенчи çапăçусенче тăшман пысăк çухату тӳснĕ. Пирĕн чаçсем трофейăсем нумай тытса илнĕ тата чылай çынна тыткăна илнĕ. Пирĕн çарсем çавăн пекех тата Киев облаçĕнчи район центрне — Таращă хулине тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла тытса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 4.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн нумай танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине персе çĕмĕрнĕ. Тулли мар даннăйсем тăрăх, нимĕçсенчен юсавлă 3 танк, 20 тупă, 80 автомашина, 6 радиостанци, боеприпассемпе çар пурлăхĕн 9 складне тытса илнĕ.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 3.000 тонна таякан суднине тата десант антармалли хăвăрт çӳрекен баржине шыва путарнă. Кунсăр пуçне, тăшманăн пĕр транспортне тата хурал тăракан икĕ катерне сиенленĕ.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен отрячĕ декабрĕн 29-мĕшĕнче нимĕçсен пысăк карательнăй экспедицийĕпе хаяррăн çапăçнă. Совет патриочĕсем, тăшмана вăйлăн ывăнтарса çапса, ăна каялла чакарнă. Çапăçура 160 гитлеровеца çити вĕлернĕ. Партизансем гранатометсем, автоматсем, винтовкăсем тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, нимĕçсен самолетне ӳкернĕ. Калинин облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен отрячĕ, шоссе çулĕ çине минăсем лартса, нимĕçсен фронт патнелле боеприпассем турттарса каякан 14 автомашинине сирпĕнтерсе янă. Кунсăр пуçне, партизансем кĕпере ишнĕ тата телеграфпа телефон линине темиçе километр тăршшĕнче пăснă.

* * *

Нимĕçсен 384-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 534-мĕш полкăн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Фриц Байер çапла каласа панă: «Эпĕ Сталинград районĕнчи çапăçусенче пултăм. Нимĕç çарĕсене çавăрса илес умĕн амантăм та, мана госпитале ячĕç. Сывалнă хыççăн мана Францире пухса йĕркеленĕ 384-мĕш дивизие ячĕç, октябрь уйăхĕнче вара каллех Российăна лекрĕм. Фронтра иртнĕ вăхăт хушшинче пулнă улшăнусем куçа курăнса кайрĕç. Лайăх вĕреннĕ кадровăй салтаксенчен нумайĕшĕ вилсе пĕтнĕ. Вĕсем вырăнне вĕренмен çынсене, çарта тăма юрăхлă марисене те илнĕ. Йышлăланса пыракан çухатусене саплас тесе, фронта сахал вĕреннĕ çынсенех ярaççĕ. Унта çын кунсерен ытларах та ытларах кирлĕ пулса пырать. Çакă вăл пирĕн полкра та лайăх курăнать. Пирĕн полк фронтра икĕ уйăх яхăн пулчĕ. Пĕрремĕш батальона аркатса тăкрĕç. 1-мĕш ротăра 16 çын, 3-мĕш ротăра 9 çын çеç тăрса юлчĕ. 2-мĕш батальон тата пысăкрах çухату тӳсрĕ. Полк командирĕ пире пĕр çын юлмиччен тытăнса тăма хушрĕ, анчах çапла туни вăл усăсăр. Юлашки çапăçура манăн взвода вырăс

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Çуракине большевикла хатĕрленер

Пирĕн сăмах ĕçрен уйрăлмасть

Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене тимлĕнрех ĕçleме вăй параççĕ. Хĕрлĕ Çара пулăшасси пирĕн чыслă тивĕç пулса тăнине яланах асра тытса, колхоз членĕсем ырмасăр-канмасăр ĕçлеççĕ. Эпир иртнĕ çулта кашни гектартан, вăтам шутпа, 14,30 центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Колхоз членĕсене кашни ĕçкунĕ тăрăх 2-шер килограмм тырă валеçетпĕр. Пирĕн колхозра 150—200 пăт тырă илекенсем вуншарăн шутланаççĕ.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурне те вăхăтра парса татрăмăр. 1944 çулшăн çăм, аш-какай парса татнă. Пирĕн кăçал государствăна сĕт 12.000 литр памалла, 8.000 литр панă та ĕнтĕ. Государствăна аш-какай 1945 çулшăн пĕтĕмпех парса татнă хыççăн 1946 çулшăн 90 пăт патăмăр. Государствăна кооператси урлă 8.112 пăт тырă сутрăмăр.

Пирĕн умра тăракан тĕп задача—вăл çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленесси пулать. Ку тĕлĕшпе те эпир аван ĕçлетпĕр. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене пĕтĕмпех сортласа хунă тата мĕнле шăтассине сăнаса пăхнă. Мĕнпур плугсене тата ултă сеялкăна юсарăмăр. Ут таврашĕсем, çунасемпе урапасем те çителĕклĕ. Хăмăт кĕççисем тума 140 килограмм çăм уйăртăмăр.

Удобренисем хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем турăмăр. Уя 3700 лав тислĕк кăлартăмăр. Тислĕк турттарма ятарласа вăхăтлăх бригада организациленĕ. Тислĕк турттарнă çĕрте 21 лаша ĕçлет. Юр тытса хăварас плана 50 процент пурнăçланă.

Пирĕн колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илме сăмах пачĕç, ăна эпир пурнăçлатпăрах. Пирĕн сăмах нихăçан та ĕçрен уйрăлса тăмасть.

П. АНДРЕЕВ,
Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ.

Ответлăха туйса ĕçлемелле

ИШЛЕЙ. Январĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсенче çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Паянхи кун тĕлне районри 117 колхозран 22-шĕ çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Çак вăхăтрах çуракине сӳрĕк хатĕрленекен колхозсем те пур-ха. Сăмахран, „Янду" колхоз 164 центнер вăрлăх сортлас вырăнне, паянхи кун тĕлне пурĕ те 60 центнер кăна сортланă. Плугсене, сӳресене тата ытти машинăсене те юсама тытăнман. Вĕсенчен нумайĕшĕсем кр айне пулнă. Уя тислĕк пĕтĕмпе те 20 лав çеç кăларнă, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухма тытăнман. Юр тытасса шутламаççĕ те. Унта ут таврашĕсене хатĕрлесси япăх пырать. Колхозра 20 лаша пур, анчах та сӳсменсем, йĕвенсем, тилхепесем тата ытти хатĕрсем 10 лаша кӳлме кăна çитеççĕ.

Колхоз председателĕ К. Трофимов юлташ çуракине хатĕрленес ĕçре ответлăха туймасть-ха. Колхозниксемпе колхозницăсене ку ĕçе мобилизацилемен.

— Хĕл вăрăм-ха, ĕлкĕрĕпĕр,— тесе лăплантарать Трофимов юлташ.

Çуракине халех тимлĕн хатĕрленме тытăнмалла. Çуракине хатĕрленес ĕçри ответсăрлăха пĕтерес пулать.

А. ТОЛСТОВ.

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Пирĕн колхозăн акмалли çĕр лаптăкĕ 1500 гектар ытла шутланать. Эпир вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах тырпулсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртрĕмĕр, государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татрăмăр.

Колхоз Хĕрлĕ Çар фондне 1.362 пăт тата оборона гектарĕсенчен пухса илнĕ 1.464 пăт тырра та государствăна вăхăтра панă. Унсăрăн пуçне колхозăн пĕрлешӳллĕ фондĕнчен тата колхозниксем перекетленĕ тырăна кооперации урлă государствăна 9.906 пăт сутрăмăр. Колхозри паллă стахановецсем: Н. В. Владимиров —67 пăт, П. Захаров—59 пăт (иккĕшĕ те Отечественнăй вăрçă инвалидĕсем), С. Д. Данилов — 57 пăт, Ф. М. Макаров—50 пăт тата ытти чылай колхозниксем 30—40-шар пăт сутрĕç.

Халĕ эпир пиккенсех çуракине хатĕрленетпĕр. Вăрлăхсем çителĕклĕ уйăртăмăр, вĕсене тасатса хунă. Плугсем, ялхуçалăх машинисем юсавлă. Колхозниксемпе колхозницăсем агротехникăна тимлĕн вĕренеççĕ.

Çуракине тухма эпир хатĕрленсе çитрĕмĕр, теме пултаратпăр. Халĕ эпир юр тытас тата уя тислĕк кăларас енĕпе ĕçлетпĕр. Ку ĕçсене çак кунсенчех вĕçлетпĕр. Пирĕн пурин те пĕр кăмăл—кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илесси, çĕршывпа Хĕрлĕ Çара нумайрах пулăшасси пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çара мĕн кирлисене парса тăма эпир яланах хатĕр. Эпир Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсемшĕн ĕçлетпĕр.

А. ЕМЕЛЬЯНОВ,
Калинино районри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКИН ВĔÇĔ

[illegible] атакăларĕç. Эпĕ хамăн салтаксене пăшалсене пăрахса парăнма хушрăм, вĕсем вара çак приказа хавасланса пурнăçа кĕртрĕç».

* * *

Алларах нимĕçсен фашистла [illegible] Киев областĕнче Василица ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен сырна акта пичетлетпĕр: «1943 çулхи октябрĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсем Василица ялĕнчи çынсен пысăк пайне Германие [illegible] хăваласа кайрĕç. Гитлеровецсем [illegible] 50 çын [illegible]. Вĕсене [illegible] хуçа пăрахса [illegible]. Хăйсем чакса кайнă чух [illegible] мирлĕ совет çыннисене тискеррĕн [illegible]. Гитлеровецсем [illegible] В. Кленицкие, В. Клиницкана, И. Сотченкова, В. Чемерага, Е. Шендерьа тата ытти [illegible] вĕлерчĕç. Ялтан тарса кайнă çынсем çеç чĕрĕ тăрса юлнă».

Акт çине çаксем алă пуснă: капитан Орлов, капитан Заробляев, юстици капитанĕ Потапкин, Василица ялĕнчи çынсем—Елена Гонтарь, Яков Бондаренко, Федор Гондарь.

Чугун çул работникĕсем стахановла вахтăна тăчĕç

КАНАШ. Чугун çул станцинче ĕçлекенсем М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмахне итлемĕ хыççăн стахановла вахтăна тăчĕç. Канаш станцийĕ 1943 çулта таварсем турттармалли плана икĕ уйăх малтан пурнăçланă. Хĕле те лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Стрелка хуçалăхне çирĕп йĕркене кӳртнĕ, чугун çул линийĕсене юсаса çитернĕ. Чугун çул çинче халь Хĕрлĕ Çарти пек çирĕп дисциплина. Станцири стахановецсем Ананьевпа Васильев юлташсем хăйсен ĕçĕнче яланах паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Стахановка С. Бурмистрова юлташ пĕччен икĕ çыншăн ĕçлет.

Станци коллективĕ, чугун çул транспорчĕ хальхи вăхăтра мĕн тери паха вырăн йышăнса тăнине туйса илсе, 1944 çулта нихăçанхинчен лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕ.

Шупашкар станцийĕн коллективĕ (начальникĕ Ф. Подгорный юлташ), М. И. Калинин юлташăн çĕнĕ çулти сăмахне сӳтсе-явса, 1944 çулта иртнĕ çулхинчен лайăхрах ĕçлеме пулса обязательство илчĕ. Кашни ĕçлекен тикĕс ĕçлесе пыма сăмах пачĕ. Стрелочникĕсем Л. Егорова, Е. Антосина, В. Сергеев юлташсем кашни икшер çыншăн ĕçлеме тупрĕç. А. Егорова юлташ хăйĕн ĕçне пултаруллăн туса пынăшăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. Вăл халĕ станцире чи примерлă работница шутланса тăрать. Çавăн пекех Малов, Евдокимов юлташсем те мĕнпур ĕçре кăтартуллăн ĕçлеççĕ.

Массăллă спорт ĕçне анлăн сарса пырар

Хуласемпе колхозлă ялсенче тата шкулсенче массăллă спорт ĕçне сарса пырас ыйтупа январĕн 4-мĕшĕнче республикăри радиопереклички пулса иртрĕ. Радиоперекличкăра ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Андреев, ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн заведующийĕ Рябов, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕсем Михайлов, Петрухин, Аверьянова, Токарев, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Евлампьев тата ытти юлташсем те пулчĕç.

Радиоперекличкăна Андреев юлташ ертсе пычĕ. Малтанхи сăмаха ВКП(б) Сĕрпӳ райкомĕн çарĕç отделĕн заведующине Авксентьев юлташа пачĕç. Сĕрпӳ районĕнче 22 шкулта «Смена» ятлă физкультура коллективĕсем пур. Вĕсенче пурĕ 1094 ача тăрать. Спорт ĕçне уйрăмах Чурашри, Тавăшкассинчи туллимар вăтам шкулсенче аван йĕркеленĕ. Вăл шкулсенче 289 ача БГТО тата ГТО значокĕсен нормисене панă.

Сĕрпӳре «Медик», «Спартак», «Буревестник», «Большевик» ятлă физкультура обществисем пур. Анчах та вĕсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Спорт ĕçĕ колхоз çамрăкĕсем хушшинче начар пулса пырать. Ялсенче йĕлтĕрсем çителĕксĕр. Çапах та вырăнти промысла артелĕсенче йĕлтĕрсем туса хатĕрлес ĕçе ку таранччен те тытăнман. Районра колхоз çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленесси те çителĕксĕр пулса пырать. Ăмăртăва пĕтĕмпе 30 командăна явăçтарма палăртнă. Анчах та вĕсем паянхи куна çитсе те тренировкăсем ирттерме тытăнман.

Канаш хула совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн председателĕ Акчурин юлташ сăмах илет. Канаш хулинче декабрĕн 19-мĕшĕнче йĕлтĕр спорчĕн хĕллехи сезонне уçнă. Пĕтĕмпе 2860 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Çав кун хулара йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне ирттернĕ. Унта 75 команда хутшăннă. Çак сезонра 20 сехетлĕ программăпа — 1.483 çын 30 сехетлĕ программăпа —1.342 çын обществăллă инструкторсемпе йĕлтĕрçĕ-боецсем хатĕрлеме палăртнă. Йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентесси уйрăмах 2-мĕш, 6-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕсенче тата вагонсем юсакан заводра организованно пулса пырать.

Октябрьски ВКП(б) райкомĕн çарĕç отделĕн заведующине Рябин юлташа сăмах параççĕ. Октябрьски районра йĕлтĕр спорчĕн обществăллă инструкторĕсене хатĕрлесси начар пырать. 30 сехетлĕ программăпа 307 инструктор хатĕрлемелле пулнă пулсан, вĕсем 37 инструктор çеç хатĕрленĕ. Çавăн пекех БГТО тата ГТО значокĕсен нормисене парассине те сӳрĕк йĕркеленĕ.

Калинино ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Степанова юлташ колхозăн çамрăкĕсем йĕлтĕрлĕ ăмăртăва тимлĕн хатĕрленни çинчен пĕлтерет. Вĕсем çак ăмăртăва ирттерме район центрĕнче 7 çынран оргкомитет тунă, 18 çĕрте йĕлтĕр базисем ĕçлеççĕ. Вĕсенче пĕтĕмпе 1.483 мăшăр йĕлтĕр, вăл шутран—500 мăшăрĕ килте тунисем. Ăмăртăва 262 команда (3.900 çын) хутшăнать. Халĕ вĕсем, йĕлтĕрпе çӳреме лайăх вĕренсе çитес тесе, час-часах йĕлтĕрлĕ походсем ирттереççĕ.

Кун хыççăн Красноармейски ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Скворцов, Куславкка ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Чернова юлташсем хăйсен районĕсенче массăллă спорт ĕçĕ мĕнле пулса пыни çинчен каласа пачĕç.

Радиоперекличка вĕçленес умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл Ишлей, Октябрьски, Йĕпреç, Красноармейски районсем массăллă спорт ĕçне сӳрĕккĕн туса пынине палăртрĕ. Ку районсенче йĕлтĕр базисем çук, халăха йĕлтĕрпе çӳреме вĕрентес ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. ВКП(б) райкомĕсен çарĕç отделĕсемпе райисполкомсен çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕсем çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Андреев юлташ, çак çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, ĕçсыннисем хушшинче массăллă спорт ĕçне анлăн сарма чĕнчĕ.

Художествăллă пултарулăх смотрне ирттеретпĕр

ТАВАЙ. (Телефонпа). Кунта художествăллă пултарулăх смотрĕ пырать. Смотра пурĕ 28 коллектив хутшăннă. Чылай коллективсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç ĕнтĕ.

«Çăлтăр» колхозри ферма заведующийĕ Казакова юлташ ташласа тата юрласа пани питĕ кăмăла кайрĕ. Çавăн пекех çав колхозри комсомолецсен хорĕ (руководителĕ — комсомол организацин секретарĕ Паромонов юлташ) лайăх юрăсем юрласа пачĕ.

Ентĕрчĕри туллимар вăтам тата Тăвайри вăтам шкулсенчи пултарулăх кружокĕсене те районри комисси лайăх хак пачĕ. Тăвайри вăтам шкулта вĕренекен Христофорова, Филиппова юлташсем «Казаченко» тата «Украинский танец» ташăсене лайăх ташласа пачĕç. Смотр январĕн 8-мĕшĕччен пырать.

А. ЯКОВЛЕВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

Калининăри педагогика училищинче вĕренекенсем художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ. Çамрăксен хорĕ «Песня о Сталине», «Песня о любимой родине», «Песня о Красной Армии» тата ытти юрăсене те юрлама вĕренчĕ. Кунсăр пуçне ташăпа юрă ансамблĕ те хăйĕн пултарулăхне кăтартма хатĕрленет. Смотра хатĕрленес ĕçе кунта Чăвашсен Государство академи театрĕн артистки Е. Волкова юлташ ертсе пырать.

В. ВОРОНОВ.

ВĂРМАН ĔÇĔНЧИ СТАХАНОВЕЦСЕМ

КАЛИНИНО, январĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Услапари «Броневик» колхоз 1943 çулхи иккĕмĕш çурçулта вутă хатĕрлемелли плана 159 процент, турттармалли плана 230 процент тултарчĕ. Вăрман хатĕрлевĕнче Василий Мясников юлташ бригади кăтартуллăн ĕçлет. Унăн бригадинче 6 çын, вĕсенчен иккĕшĕ лашапа, ыттисем çуран ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ П. Федоров юлташ хăй те вăрманта ĕçлекенсем патĕнче час-часах пулать. Колхоз вăрманта ĕçлекенсем патне çимелли продуктсемпе лаша апачĕсем вăхăтра леçсе тăраççĕ. Çапла пулăшса тăнине кура бригада кунсерен нормăна тултарса пырать.

Мясников юлташ нумай пулмасть хăйĕн бригадинче ĕçлекенсене СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин юлташ 1944 çул çитнĕ ятпа каланă сăмаха тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Вăрманта ĕçлекенсем, иртнĕ çулталăкри вăрçă ĕçĕсемпе паллашнă хыççăн, çĕнĕ çулта татах ăнăçлă ĕçлесе, фронта ытларах пулăшма ĕмĕтленеççĕ. Вĕсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли пĕрремĕш кварталти плана 200 процент таран тултарма шухăшлаççĕ, ытти бригадăсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнче «Красноармеец» колхозран пынă Михайлов юлташ бригади лайăх ĕçлет. Вăл пăрлă çул тăрăх кунне 2,5 кубометр турттарас вырăнне 8 кубометр турттарать. Паянхи куна бригада вутă касса хатĕрлемелли плана 184 процент, турттармалли плана 220 процент тултарнă. 60 çултан иртнĕ Н. Кузнецовпа А. Кузнецова юлташсем кунсерен 3-шер кубометр вутă касса хатĕрлес вырăнне 4—5-шер кубометр хатĕрлеççĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

Шкул ачисем каникул вăхăтĕнче

СЕНТĔР, январĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Шомикри туллимар вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсемпе пионерсем каникул вăхăтĕнче колхоза пысăк пулăшу параççĕ.

«Колос» колхозра шкул ачисенчен 4 звено организациленĕ. Звенора вуншар ача. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. 6-мĕш класра вĕренекен комсомолец Николай Плотников ертсе пыракан 1-мĕш звено кăтартуллăн ĕçлет, ăмăртура малта пырать. Çак звенори ачасем пĕр кун хушшинче кăна 15 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Хире тислĕк кăларас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлеççĕ.

Комсомолецсемпе пионерсем кĕске вăхăт хушшинчех 10 гектар çинче юр тытрĕç. 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухрĕç. Шкул ачисемпе колхозниксем тăрăшса ĕçленине пула, «Колос» колхоз суракине хатĕрленсе çитрĕ ĕнтĕ. Унта ял хуçалăх машинисене тахçанах юсаса лартнă. Вăрлăхсене сортласа, унăн шăтаслăхне тĕрĕсленĕ. Хире 2.650 лав тислĕк кăларнă.

М. КАРПОВ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕнчи Инди чаçĕсем, тăшман позицийĕсенчен çӳлерех тăракан паха вырăнти тытса илсе, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Январĕн 3-мĕшĕнче союзниксен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Вилла-Перозари (Туринран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) шарикоподшипник заводне тата Туринри питĕ кирлĕ чугун çул узелне атакăланă. Союзниксен бомбардировщикĕсем Югослави çыранĕнчи Сплитри тата Шибеникери доксемпе чугун çул сооруженийĕсене атакăланă.

Предорга (Югославия) Германин пĕр çĕре йышлăн пухăнса тăнă çарĕсене сывлăшран пырса атакăланă. Çăмăл бомбардировщиксем тата истребитель-бомбардировщиксем çĕр çинчи чаçсене кунĕпех пулăшса тăнă.

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче Инди чаçĕсем, тăшман чылай вăйлăн хирĕç тăнине сире-сире ярса, малалла тапăнса пыраççĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем пĕр кирлĕ çӳллĕ вырăна тытса илнĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксен пысăк мар соединенийĕ Дупницăри (Софирен кăнтăр-тарахра) чугун çул кĕперне тата чугун çул станцине атакăланă. Вăтам бомбардировщиксем тăшманăн Травникра пухăнса тăнă çарĕсемпе казармĕсене тата Добойри (Югославия) сортировка станцине тапăннă.

МЕНЬШИКОВ ЮЛТАША ЮНРРАН ГЕНЕРАЛЬНАЙ ДИРЕКТОРĔН ЗАМЕСТИТЕЛĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТНИ

ВАШИНГТОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юнрран (пĕрлешӳллĕ нацисене пулăшса ура çине тăратмалли администрацин) генеральнăй директорĕ Лимэн СССР делегатне Меньшиков юлташа Юнрран генеральнăй директорĕн тăватă заместителĕнчен пĕри пулма лартни çинчен пĕлтернĕ.

РУЗВЕЛЬТ СЫВЛĂХĔ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельтăн секретарĕ Эрли çапла каланă: шăнса пăсăлнă президентăн сывлăхĕ палăрмаллах лайăхланчĕ, анчах президент вырăн çинчех выртать-ха. Президентăн сывлăхĕ ăна тепĕр эрнере конгреса пырса унта Пĕрлешӳллĕ Штатсен лару-тăрăвĕ çинчен каласа пама май парасси паллă мар-ха, тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировочнăй авиацин «Москито» йышши самолечĕсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене атакăланă, хăйсен базисене вара пĕр çухатусăрах таврăннă. Январĕн 4-мĕшĕнче, тул çутăлса килнĕ вăхăтра, бомбардировщиксен соединенийĕсем пĕрин хыççăн тепри кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕ тĕлĕнчен Франци еннелле иртсе-иртсе кайнă.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем январĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла Па-де-Кале районĕнчи çар объекчĕсене тапăннă. Америка бомбардировщикĕсене союзниксен авиацийĕн истребителĕсем хӳтĕлесе пынă. Бомбардировщиксем пурте хăйсен базисене таврăннă.

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем ĕнер кăнтăрла Кильри суднăсем тăвакан верфе тата Мюнстерти сортировка станцине тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă. Январĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Берлинри тата Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

Америкăн 450 бомбардировщикне яхăн, пĕр 300 истребитель хӳтĕлесе пынипе, ĕнер Çурçĕр Францин çыранĕ хĕрринчи çар объекчĕсене питĕ вăйлăн тапăннă. Америка самолечĕсем хыççăн тăшманăн объекчĕсене Англи авиацийĕ те тапăннă.

Тăшман самолечĕсем хирĕç вăйлă тăман.

ЛОНДОН, январĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: халь паллă пулса тăнă тăрăх, Лейпциг хулин варринчи пайĕ (Лейпциг çине пĕр уйăх каялла бомбăсем пăрахнă) ишĕлчĕк купи çеç пулса юлнă. Хулара çӳреме чи кирлĕ магистральсенчен хăшпĕрисене çеç уçнă. Париж çывăхĕнчи шарикоподшипник заводне тата моторсем тăвакан завода та чылай пысăк сиен тунă, вĕсене декабрĕн 31-мĕшĕнче тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен çапла пĕлтереççĕ, декабрĕн 31-мĕшĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Баньа-Лука хули çине наступлени пуçласа янă та январĕн 2-мĕшĕнче хулан çуррине йышăнса илнĕ. Хула урамĕсенче çапăçусем пыраççĕ. Гитлеровецсем уйрăм пысăк çуртсенче тĕрекленсе ларнă. Эсэсовецсен дивизийĕнчи нумай салтака тыткăна илнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире хаяр çапăçусем пыраççĕ. Герцеговинăра, Санджакра тата Черногорире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем малалла тапăнса пынă. Ытти секторсенче партизансен патрулĕсем хуралласа çӳренĕ.

АГРОТЕХНИКА КĔТЕСĔ

Юр тытни—тырпул тухăçлăхне ӳстерет

Юр тытса хăварас ĕç хальхи вăхăтри ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Иртнĕ кĕркунне, çанталăк уяр тăнăран, кĕрхи тырăсемпе курăксем айĕнче нӳр сахал юлчĕ. Çакна шута илсе, юр тытса хăварма халех тытăнмалла.

Кĕрхи тырăсемпе курăксем акнă участоксем çине ытларах юр тытса хăварса, çуркуннехи шыва анлăн усă курма тивет. Çитес çуркунне çумăрлă е типĕ пуласси халĕ паллă мар-ха, çавна пула пирĕн колхозсен уйхирсенче ытларах юр тытса хăварма тăрăшас пулать.

Юр тытса хăвармалли плана пур колхозсене те çитернĕ. Çак плана тултарассишĕн пикенсех ĕçлемелле. Ку ĕçе вăраха тăсни сиенлĕ. «Хĕл тин пуçланчĕ-ха» тесе лăпланса лармалла кирлĕ мар.

Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре уя тĕрлĕ удобренисем тăкни кăна çителĕклĕ мар-ха. Удобренисем çĕр ăшĕнче аван çĕрччĕр тесен, ытларах нӳр кирлĕ.

Чăваш республикинчи çанталăкра юр хĕл пуçламĕшĕнче ытларах ӳкет. Çавăнпа та ку ĕçе халех пуçăнмалла, хире малтанхи юра тытса хăварма тăрăшмалла. Юр тытнин тĕллевĕ хире ытларах шыв пухăнниччĕ кăна мар, юр вăл кĕрхи тырăсемпе нумай çул хушши ӳсекен курăксене витсе ăшăтать, вĕсене шăнса пăсăлма памасть. Юр хулăнăшĕ 30—40 сантиметр пулсан, кĕрхи тырăсем шăнмаççĕ.

Кĕрхи тырăсем шăнса пĕтес хăрушлăх кăçал пур, мĕншĕн тесен кĕрхи тырăсене хăшпĕр колхозсем каярах юлса акрĕç, çавăнпа вĕсем çамрăк та имшеркке юлчĕç тата шăтса тухассипе ӳсесси те (кĕркунне çумăрсем сахал пулнипе) çителĕксĕр пулчĕç. Çакăн пирки кĕрхи тырăсен калчисем лайăх тĕрекленсех юлаймарĕç, юр айне вăйсăртарах кĕчĕç. Вĕсем шăнса пĕтме пултараççĕ. Çакăн пек имшеркке юлнă калчасем çине юр тытни калама çук паха мероприяти пулса тăрать, вĕсене пĕтесрен çăлса хăварать тата çуркунне хăвăртрах ӳсме май парать.

Калчасем çине юр тытса, калчасене шăнасран сыхласа хăварни тырăсене çуркунне тепĕр хут пăсса акассинчен хăтарать тата ытлашши тăкакран çăлать. Пăсса акнă çĕре каякан вăрлăха колхоз хуçалăхĕнчи ытти нушасем валли усă курма май туса парать.

Чи сивĕ кунсем пирĕн республикăра январьпе февраль уйăхĕсенче пулаççĕ. Çавăнпа та калчасем çине юр тытса вĕсене сыхласа хăварассишĕн кĕрешессине çак кунсенчех тытăнмалла.

Чăн малтанах, кивĕ щитсене тĕрĕслемелле, юсамалла та хире лартмалла, вĕсене чăн малтанах калчасем çамрăк юлнă вырăнсене лартас пулать. Çакăнпа пĕрлех çĕнĕрен щитсем тума тытăнмалла. Пуриншĕн те паллă, юр тытас ĕçре чи паха щит пулса тăрать.

Щитсене хăмасенчен тумалла, чугун çулсем хĕрринче час-часах щитсем курма пулать, çавсем пек тумалла ĕнтĕ щитсене пирĕн колхозниксен. Анчах ун пек щитсене тума хăмасем, пăтасем кирлĕ. Халь вĕсене тупма йывăртарах. Çавăнпа щитсем тунă çĕрте ытти майсемпе те туллин усă курмалла.

Щитсене йывăç турачĕсенчен, йăмра хуллисенчен, хăмăшран тата улăмран та тума пулать.

Кун пек щитсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тумалла. Рамкисене шертесенчен тумалла, хушшине вара çӳлерех кăтартнă материалсене çыхса пымалла. Рама хушшине хăмăш е улăм хунă чухне щитсене пĕр шăтăксăр тума кирлĕ мар, вĕсем пĕтĕм щитăн лаптăкĕнче 60—70 процент йышăнмалла. Çакăн пек щитсем вара юра вăрăм кукасем тука пухаççĕ.

Щитсене вырăнтан вырăна куçарма йывăр ан пултăр тесе, вĕсене çĕр çумнех лартмалла мар, çĕртен 10—20 сантиметр çӳлерех лартас пулать. Щитăн çӳллĕшĕ пĕр метр е метр çурă, тăршшĕ 2 метр пулмалла. Щитсене кашнине уйрăм е пĕр рете лартса тухмалла. Сăртлă вырăнсенче малтан çӳлĕ вырăна лартас пулать, унтан вара юр хулăнăшĕ 40—50 сантиметр пухăнсан тепĕр вырăна—аяларах куçармалла.

Юр тытнă çĕрте щитсемпе кăна мар, ытти тĕрлĕ япаласемпе те усă курма пулать. Сăмахран, çапăсемпе, йывăç турачĕсемпе, уламран е хăмăшран çыхнă кĕлтесемпе усă курма пулать. Çак япаласене уя пĕр ретĕн хурса тухмалла е шахмăтлă йĕркепе вырнаçтармалла.

Вĕсен хушшисене мĕн пысăкĕш тăвасси мĕнле вырăнтинчен тата çил вăйĕ мĕнлинчен килет. Вăйсăртарах çиллĕ вырăнсенче 3—5-рет лартмалла, вăйлă çиллĕ вырăнта 5—8 рете çити лартас пулать. Ретсен хушши 10—15 метр пулмалла. Шахмăтла йĕркепе тунă чухне йывăç турачĕсемпе кĕлтесене пĕр-пĕринчен 50—100 сантиметр хушши хăварса лартмалла.

Çĕре шыв ытларах сăрхăнса юлтăр тесен, юра сахалтан та 50—60 сантиметр хулăнĕш тытса юлас пулать. Уйрăмах ку вара кĕркунне çумăрсем пулман çулсенче ытларах кирлĕ. Юр пухăннă май, щитсене е ытти юр тытмалли япаласене çĕнĕ вырăна куçармалла. Ку вара юра пысăкрах лаптăк синче тытса хăварма май парать.

Юр тытса хăварас ĕçре хыр, чăрăш турачĕсемпе анлăн усă курмалла, вĕсене уя пысăках мар купасемпе пăрахса тухмалла.

Çурхи тырăсем акма палăртса хунă хирсенче юр тытас ĕçре хăшпĕр тĕлте юрпа хăйĕнпех усă курма пулать. Кунта щит та, юр тытмалли ытти япаласем те кирлех мар, юр купиcемпех усă кураççĕ. Юр выртакан вырăнсенчен тимĕр кĕреçесемпе юра кирпĕчсем пек тăваткăл е тăрăхларах тăваткăл касаççĕ те 50—60 сантиметр çӳллĕш купасем тăваççĕ. Куписене шахматлă йĕркепе, пĕр-пĕринчен 3—4 метр хушши лартса тухаççĕ.

Юр куписене юра сухаласа та тума пулать. Юра сухаламалли япалана кашни колхозри платникех тума пултарать. Ăна хулăм хăмасенчен виçĕ кĕтеслĕ тăваççĕ. Юр сухаламалли япалан çӳлĕ енне (кӳлмешкĕн) çаклатмалли тăвас пулать. Юр сухаламалли виçĕ кĕтеслĕ япалан тăршшĕ пĕр икĕ метр пулмалла, виç кĕтесĕн сарлакăшĕ хыçал енчи 1,5 метр пулмалла. Юр сухаламалли япалапа кашни 5—10 метртан пĕр йĕр туса тухмалла. Сухаланă йĕре юр тултарсан, тепĕр хут сухаламалла. Апла тумасан, йĕр пĕтнĕ хыççăн, çил юра пур-пĕрех çырма-çатрасене вĕçтерсе каять.

Юра сухаласси суракки валли пăхнă уйхирсенче кăна тума юрать. Калчасем тата акнă курăксем çинчи юра сухалама юрамасть. Мĕншĕн тесен, сухаланă май, ӳсен-тăрансен тымарĕсем çаралса юлма тата шăнма пултараççĕ. Çавăн пекех калчасемпе акнă курăксем çинче юра щитсăр-мĕнсĕр, юр куписемпе кăна тытма та юрамасть.

Çапла вара, юр тытас ĕçре ăçта мĕнле меслетпе усă курмаллине лайăх пĕлмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ колхозсенче юр тытас ĕçе халех тытăнма хушаççĕ. Юра чăн малтанах кĕрхи тырăсем тата нумай çул хушши ӳсекен курăксем акнă лаптăксем çинче тытмалла, çавăн пекех ку ĕçе çӳллĕ вырăнсенче те васкасах тумалла.

Юр тытас ĕçе малта пыракан колхозсем яланах пысăк вырăна хунă. Юр тытни вăл—пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшри питĕ паха та усăллă ĕç пулса тăрать. Кăçалхи çул уйрăмах юр тытмалли плана кашни колхозăн ытлашшипех тултарас пулать, ăна тума пирĕн республикăри колхозсен лайăх условисем пур.

Пирĕн республикăри çамрăксен, Вăрнар районĕнчи çамрăксен пуçарăвне йышăнса илсе, юр тытас ĕçе халех пуçласа ямалла, гектартан çĕр пăтран кая мар тырă туса илессишĕн кĕрешĕве тухмалла. Вăрнар районĕнчи çамрăксем хăйсем чĕнсе каланинче: «Мĕнпур çамрăксене юр тытас ĕçе организацилер»,—тесе çыраççĕ.

Вăрнарсен сăмахĕ ĕçрен уйăрлмасть, вĕсем хăйсем çи[illegible] обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ.

Комсомолецсем, шкулти аслă классенче вĕренекенсем, çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем, Вăрнар çамрăкĕсем чĕнсе каланине йышăнса илсе, пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешĕве тухар. Колхоз хирĕсенче çине тăрса ĕçлесе, тискер тăшмана хăвăртрах çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Л. ПЕЛЬЦИХ,
Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн профессорĕ.

Отв. редакторăн ĕçĕсене тăвакан П. Т. ЗОЛОТОВ.

Чăвашпромстрахкассăка ялан ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: çар çыннисен семьисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, оргинструктор, ĕçри инкексемпе кĕрешекен инспектор, бухгалтерсем тата шут ĕçне вĕренекен учениксем, çавăн пекех тата доверенпăй врач кирлĕ, унăн ĕç укçи 800 тенкĕ пулать.
Ĕçлеме кĕрес текенсен çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Набережная Кайбулка, 21 (Кожупряжь промартелĕн çуртĕ).

Пĕр об'екта çакăн пек работниксем кирлĕ: продснаб начальникĕ, продснаб агенчĕ, продснаб бухгалтерĕ, склад заведующийĕ, завхоз, кассир-счетовод, механик, лаборатори заведующийĕ, инженер-строитель, техник-строитель, тимĕрçĕ. Çемьесĕр çынсене общежити, çемьеллисене хваттер параççĕ.
8 сехетрен пуçласа 12 сехетсен тата 13 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлмелле, Телефон: 6—02—икĕ звонок.

Строительствăна Мускав патĕнче ĕçлеме главнăй бухгалтерсем тата бухгалтерсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, угол ул. Калинина и 15-летия Комсомола, 2-й этаж, Управление строительства.

Чăвашспецторга ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: товаровод, пĕрлешсе апат-лапас ĕçĕн бухгалтерĕ, делопроизводитель (машинистка), пулăшуллă хуçалăх директорĕ, счетовод-кассир, çĕвĕçсем тата атă çĕлекенсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 4, Чăвашспецторг.

ГЛАВЗАГОТПЕНЬКОПРОМĂН Чăваш конторине çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: планпа-финанс секторĕн заведующийĕ, экономист-финансист, бухгалтер-ревизор, старши бухгалтер, бухгалтер тата счетовод.
Хваттер пур.
Адрес çапла: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 64.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.